# Уйрӑлу

Чӗре тулличчӗ кӑмӑлӑм...
Мӗншӗн вӑркать-ши тӑвӑллӑн
Ҫак лӑпкӑ ир?
Элле уйрӑлмаллах пирки
Ҫулӑмсӑрах ҫунатпӑр-ши
Санпа эпир?

Тӗл пултӑмӑр, паллашрӑмӑр,
Пӗр-пӗринпе туслашрӑмӑр
Хӑналӑха.
Паян ӗнтӗ "Сыв пул!" тесе
Манран уйрӑлан эсӗ
Яланлӑха...

Уйрӑлатӑн, тусӑмҫӑм,
Ҫампа-ҫке пуҫӑм усӑнчӗ
Салхуллӑн ман.
Анчах ӑҫта ҫитсессӗн те
Хӑвна юратнӑ туссене
Нихҫан ан ман.

Ӑҫтан пӗлес-ха: пурӑнӑҫ
Ҫулсем татах, тен, курнӑҫӗҫ.
Ун чух вара
Эп мӗн терн юратнине
Хӑвах ӑнланӑн, тусӑмҫӑм,
Сӑмахсӑрах...

Ҫак сехетре мӗнех калам?
Уйрӑлатӑп санпалан
Куҫҫульсӗрех.
Сыв пул, сыв пул, чӗрем уҫҫи,
Ҫитес ҫӗре телейлӗ ҫит
Теетӗп ҫеҫ.

1939

*Тукташ, И. Уйрӑлу [сӑвӑ] / И. Тукташ // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 224.*